*Виççĕмĕш пайĕ*

## Писатель пултарулăхĕнчи юрă пĕлтерĕшĕ

Юхма Мишшин чи пысăк пĕлтерĕшлĕ, чи паллă хайлавĕсенче пуринче те юрă питĕ пысăк вырăн йышăнать. Акă, унăн малтанхи хайлавĕсенчен пĕри - "Юрăçă шăпи" повесть. Унта писатель Шавлама ятлă авалхи чаплă юрăçă çинчен, вăл епле ирĕклĕхшĕн кĕрешни çинчен çырса кăтартать. "Юрăçă шăпи" повесть вăл Юхма Мишшин хăйнеевĕрлĕ юрри те. "Виççĕмĕш симфони" повеçĕ те вăл хăйнеевĕрлĕ юрă. "Мускав çулĕ" тата "Кăвак çĕмрен" романсем пирки эпир маларах çырнăччĕ ĕнтĕ. Е тата, акă, "Вилĕмсĕрлĕх" тетрологине кĕрекен романсене вулар-ха. Вĕсенче те юрă мĕн тери пысăк вырăн йышăнать.

Акă, Чăвашкассинче, "Нимене" юрра юрласа, шкул тăваççĕ, Наçтапи тăван ялне Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ юрра юрласа таврăнать. Юратнă хĕрĕшĕн тискер сынсене тавăрнă паттăр чăваш хăйне куç янă çĕре, Çĕпĕре, авалхи халăх юррине юрласа утать. Турцине ĕмĕрлĕхе куçса каякан чăвашсем те хăйсен тăван çĕрĕ-шывĕпе юрă юрласа уйрăлаççĕ. Е тата, акă, И.Я.Яковлев чăваш юррине епле итленипе Чăваш халăх писателĕ мĕнле çырса кăтартнине вулар-ха:

"Сасартăк, инçех те мар, сылтăмра, Пăла шывĕн айлăмĕнче, хĕрсем юрлани илтĕнсе кайрĕ...

Лашасем чарăнасса та кĕтмесĕр, Иван Яковлевич тăрантас çинчен анчĕ те çырма еннелле утрĕ. Çул хĕрринчех - хуçăк тăраллă вата йăмра. Яковлев ун çумне пырса тăчĕ те каçăхса кайсах хĕрсем епле юрланине итлеме тытăнчĕ.

Çÿллĕ тусем çинче - çавра чул,<br>
Çавра чул тăрринче - чун савни.<br>
Кунталла та пăхать те<br>
Кулянать;<br>
Унталла пăхать те<br>
Макăрать...

Юрă, ах тур, Яковлевăн чун-чĕрине сулăмпа пĕçертнĕ пекех ыраттарса илчĕ. Чăтаймарĕ вăл, вата йăмра çумне пуçĕне

таянчӗ, икӗ куҫӗнчен те туп-тулли куҫҫулӗ юхса тухрӗ. Мӗн ҫинчен юрласассӑн та, чӑваш этемми хурлӑхпала хӗн-хур тӗлӗнчен ним асӑрхамасӑр иртсе каяймасть...

"Мӗн тери искусство! - шухӑшларӗ Яковлев. - Ӗмӗрсем хушши чӑваш этемми ҫакӑ хӑйӗн ытарайми пултаруллӑхне упрама тӑрӑшнӑ... Ку вӑл - пурнӑҫ, шухӑшласа кӑларнӑ япала мар... Эпир майӗпен-майӗпен чӑн-чӑн, пысӑк, европӑлла культурӑллӑ халӑх шутне кӗрӗпӗр. Анчах ҫак илеме ун чухне те манмӑпӑр..."

Яковлевӑн чӑваш опери, чӑваш балечӗ ҫыртарса, ҫак ытарайми илеме унта курасси килсе кайрӗ."

Е тата, акӑ, Сементей сӗрмекупӑс туса мӗн тери хитре юрланине ҫыра-ҫыра кӑтартни мӗнле ытарайми, пӗтӗмпех асра юлать. Е тата Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗн хорӗ юрланине ҫырса кӑтартни... Вулатӑн та... чун-чӗре ҫӗкленсе-хӑпартланса каять. Е тата, акӑ, ҫак историлле ярӑмри "Термен" роман вӗҫӗнче Сӗве хӗрринче, Чӗмпӗр ҫывӑхӗнче, И.Я.Яковлевӑн "Ҫӑлтӑр ушкӑнӗнчи" чи чаплӑ вӗренекенӗсем пӗр-пӗринпе тӗл пулнине ҫырса кӑтартнине вулар-ха.

"Максимов пурне те ыталаса илчӗ.

- О-о, Костя та кунтах! - питӗ савӑнчӗ вӑл. - Тавтапуҫах сире, тусӑмсем, ҫапла кӗтсе илнӗшӗн. Хам та ҫав тери тунсӑхларӑм. Питӗ васкарӑм сирӗн пата...

- Ватӑ юмахҫӑ пекех нумай сӑмахлатӑн, - тӗкрӗ тусне хулӗнчен Павлов. - Кала, ӑнӑҫлӑ кайса ҫӳрерӗн-и.

- Питӗ ӑнӑҫлӑ! - савӑнса кулса ячӗ Максимов. - Акӑ, катамкка тулли юрӑ! Пӗлетӗн-и, тусӑм, мӗн тери хитре юрӑсем пур!..

Степан Максимович Макаровран сӗрмекупӑсне илчӗ, кӑшт ӑна йӗркелем пекки туса аппаланчӗ, вара калама тытӑнчӗ те юрласа ячӗ:

> Алран кайми аки-сухи,
> Алран кайми аки-сухи...
> Асран кайми атти-анне,
> Асран кайми атти-анне,
> Ай-яй-яй! Ай-яй-яй!..

- Вӑйлӑ, вӑйлӑ!.. Ытарайми вӑйлӑ!.. - хӑпартланса кайрӗ Павлов. -Гениллӗ япала!.. Гимн!.. Пин-пин ҫул хушши ҫак ҫӗр ҫинче пурӑнакан халӑхӑн паянхи гимнӗ! Ӗҫчен те хастар,

тулăх, тăванлăх мĕскерне лайăх пĕлекен халăхăн гимнĕ. Ку вăл, тусăм, - ыталаса илчĕ Вăл Максимова, - пирĕн "Нарспи" оперăн пуçламăшĕ пулĕ. Ятарласа çак гимн валли пролог çыратпăр. - Иванов енне çаврăнчĕ. - Хирĕçлеместĕн-и, Костя.

- Мĕншĕн хирĕçлес. - *ăшшăн каларĕ Константин Васильевич.* - Оперине çыраканĕсем эсир...

Юрăçă Юхма Мишшишĕн чи сăваплă çын. "Юрăçă вăл - турăсен сăмахне калакан çын! Юрăçă вăл - манпа, Аполлонпа тан этем!.." - калать Зевс пĕтĕм турăсем умĕнче Юхма Мишшин "Юрăçăпа патша" историлле романĕнче. Чăнах та, юрăçа вĕлернĕшĕн çур тĕнчене çĕнтерсе илнĕ Александр Македонский хăйĕн вилĕмсĕрлĕхне çухатать, малашне çапăçусенче çĕнтерейми пулать. Е тата "Юрăçă шăпи" повеçе илер. Пĕтĕм халăх юратакан Шавлама юрăçа экийетсем *юрланăшăн Эптĕлмен* ятлă çĕрмепуян питĕ тарăхать те йытăсене пăрахса парса *вĕлерттерет. Çакна пĕлсен,* пĕтĕм халăх пăлхава çĕкленет те Эптĕлмене хăйне те, унăн тискер тарçисене те вутра кĕллентерет. Е тата аса илер-ха. Элпи юрăçа вĕлернине пĕлсессĕн, чăваш паттăрĕсем чăтса тăраймаççĕ, чакса пыма тытăннисем юлашки вăйне пухса, тăшмана хирĕç каяççĕ те ăна çĕмĕрсе тăкаççĕ. Эппин, чăнласах та юрăçă - сăваплă çын. Ăна кӳрентерме те, тивме те юрамасть. Ку вăл юрă сăваплăхĕ çинчен каланиех, юрра питĕ пысăка хуниех...

Ку вăл пурнăçра та çаплах. Историе тĕпчесен те эпир *çакнах куратпăр. Авалхи чи тискер* çарпуçĕсемпе тирансем те, çынвĕлеренсем те юрăçăсене тивме хăраççĕ. Çур тĕнчене çĕнтернĕ Чингизхан та, тискер Тамерлан та, Наполеон та юрăçăсене кӳрентерме хăяйман. Авалхи чăваш легендисемпе историлле преданийĕсем те çакнах каласа кăтартаççĕ. Аса илер-ха Юхма Мишши çырса илнĕ Саркамăш юрăçă çинчен каланине. Вăл сĕм вăрман варринче тискер хурахсен аллине лекнĕ. Хурахсем никама та шеллемен. Анчах хăйсен аллине лекнĕ çын юрăçă иккенне пĕлсен, пурте ун умне чĕркуçленсе лараççĕ те унран *каçару ыйтаççĕ. Кăйран вара тăпăлтарса илнĕ япалисене* тавăрса параççĕ те çул кăтартса, питĕ хисеплесе ăсатса яраççĕ.

Юхма Мишши юррисене чăвашсем кăна мар, вырăссем те, тутарсем те, мăкшăсем те, ытти халăх çыннисем те хăйсен чĕлхипе юратса юрлаççĕ. Ку вăл питĕ савăнмалли пулăм. Эппин, юрă вăл халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетмелли вăй та. Ку тĕлĕшĕнчен Юхма Мишшин "Тутар хĕрĕ Диля" юрри

уйрăмах курăмлă, пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ăна вăл 1984 çулта çырнă. Тутар поэчĕсем ăна питĕ кăмăлланă та тӳрех хăйсен чĕлхине куçарнă, тутар композиторĕсем юрра хывнă. Халĕ ку юрра тутарсен чи маттур юрăçисем юрлаççĕ. Астăватăп-ха, Шупашкарта, Чăваш Республикин уявĕнче Комсомольски районĕнчи Урмаел ялĕнчи хор сцена çине тухрĕ. Юрăçăсем валли сценине Чăваш академи театрĕ умĕнче тунăччĕ. Конферансье пĕлтерчĕ:"Татар кызы Диля. Сăмахĕсем Юхма Мишшин". Питĕ хитре, асра юлмалли юрă. Çав юрра Юхма Мишши Хусанта чухне çырнă:

Пĕр пичĕ çут уйăх,
Тепри - сар хĕвел,
Ик куçĕ çап-çутă, ик çăлтăр пекех.
Вăтаннăн кăшт култăн та... сӳнчĕ хĕвел,
Эс кайнă сукмак çеç - ман хуйхă пекех,
Тутар хĕрĕ Диля...

Эс кайнă çулпа хальваскать кĕркунне
Тăкса çулçине садри çĕмĕрт çинчен.
Шур хурăн кăна упрать хăй куллине,
Çак хурăн эс мар-ши, тетĕп хуллен,
Тутар хĕрĕ Диля...

Те тĕлĕк ку пулчĕ, те чăн курăну,
Пусать пуслăх пек сивĕ тунсăх мана.
Умрах сан куçу, сан куллу, сан сăну,
Пит хăвăрт амантрĕç вĕсем ман чуна,
Тутар хĕрĕ Диля.

Шур акăш пек килчĕ каллех çуркунне,
Ăçта эс, çаплах кĕттеретĕн мана.
Чечек-кавирпе витĕнет çĕр-анне,
Мĕнпур чечеке ларнелес теп сана.
Тутар хĕрĕ Диля...

Мăкшăсем те Юхма Мишшин "Мăкшă хĕрĕ Марине" юрра питĕ юратса хăйсен чĕлхипе юрлаççĕ. Болгаринче те Юхма Мишши юрри пăлхарла янăрать. "Варлă хула çав эс, Варна..." ятлă юрă ку. Ăна Юхма Мишши 2001 çулта Варна хулинче çырнă. Пăлхар поэчĕ Христо Иванов пăлхарла куçарнă. Иван Добриев композитор кĕввине çырнă.

Юхма Мишшин юррисене вырăсла тĕрлĕ хуласенче юрлаççĕ. Ку тĕлĕшĕнчен ун патне Ставрополь хулинчен, унта пурăнакан

Николай Степанов композитор çырни питĕ кăсăк.

"Когда попала в мои руки Ваша книга "Сурбан", я очень обрадовался, т.к. Ваши стихи очень лиричны и мелодичны, - çырать вăл. - Я написал пять песен на ваши слова: "Женские очи", "Когда мы были в разлуке", "Девичья песня", "Девушка в белом плаще", "Братский ковш". В наше время найти мелодичные стихи не легко. Многие пишут белым стихом. У многих стихи тяжеловесны, не ложатся под мелодию. А Ваши стихи мне очень понравились. Мои песни на ваши слова уже я роздал певцам. Они уже их исполняют. Думаю, что вы не будете возражать. А для того, чтобы Вы знали, как они звучат, я эти стихи записал на пленку и посылаю Вам."

Кун пек çырусем Юхма Мишши нумай илет. Ку вăл Чăваш халăх çыравçин юррисем пĕтĕм тĕнчипех сарăлса пынине питĕ лайăх кăтартса параççĕ.

* * *

Нумаях пулмасть радиопа Иван Христофоров юрăçă юрланине итлерĕмĕр. Ытарайми чаплă юрăçă вăл. Юхма Мишши сăмахĕсемпе кĕвĕлленĕ юрă - "Тусăм тухмĕ чĕререн". Питĕ хитре юрă.

Шăпчăк-кайăк сад пахчине
Вĕçсе килчĕ кăнтăртан.
Тусăм кайрĕ пит инçете,
Салам ячĕ аякран.

Ачаш-ачаш сăмахĕсем
Ĕмĕр юлчĕç асăма.
"Сыв пул!" - тенĕ сăмахĕсем
Çунтараççĕ ăшăма.

Шăпчăк-кайăк юрланине
Ялан итлес килет ман.
Тусăм мана ас илнине
Пĕлсех тăрас килет ман.

Шăпчăк-кайăк сад пахчине
Вĕçсе килĕ çулсерен.
Ыр çын нумай - нумаййипе,
Тусăм тухмĕ чĕререн.

Мĕн тери паха вăл сăвăçăпа юрăçă пĕр евĕр чунлă пулни, пĕр-пĕрне ăнланни, пĕри теприн шухăшне аталантарса халăх

патне илсе ҫитерме пултарни. Юхма Мишшишĕн ҫакăн пек юрăҫсенчен пĕри вăл - Иван Христофоров. Питĕ хитре, Юхма Мишши ҫырнă юрă тексчĕсенчи сăмахсен кашнин хăйне майлă интонацине чупĕ-чĕрипе ăнланса, вĕсене илемлетсе юрлама пĕлетҫке-ха вăл. Акă тата Иван Христофоров юрăҫă Юрий Жуков композитор Юхма Мишши сăввине ҫырнă "Иртсе кайрĕ ĕмĕр сисĕнмесĕр" юрра итлер-ха!.. Мĕнле пуян шухăш-кăмăл, чун туртăмĕ, философи ҫав юрăра. Иван Христофоров чăнласах та ҫав юрра пĕрре итлесех ĕмĕр асра юлмалла юрлать.

Тата эпир ҫакна та каласшăн: Иван Христофоров хăй те питĕ ăста юрăсем кĕвĕлет. Вăл Юхма Мишши сăмахĕсемпе сахал мар юрă хывнă. Кам пĕлмест пуль Иван Христофоров юрлакан "Савнирен хакли никам та ҫук" юрра.

Кайăк пулăттăм,
Вĕҫсе кайăттăм
Савнине курма паянах.
Ах, пĕлмен ҫакна,
Чухламан ҫакна -
Савнирен хакли никам та ҫук.

Кайăк пулăттăм,
Юрă юрлăттăм
Савние кăна мухтаса.
Ах, пĕлмен ҫакна.
Чухламан ҫакна -
Савнирен хакли никам та ҫук.

Кайăк пулăттăм,
Ҫунат сулăттăм
Савни пулсанах юнашар.
Ах, пĕлмен ҫакна,
Чухламан ҫакна -
Савнирен хакли никам та ҫук.

Ҫыравҫăпа юрăҫă, ҫыравҫăпа композитор пĕр чунлă пулни, вĕсем пĕр-пĕрне ăнланни - питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăм. Ку тĕлĕшĕнчен Юхма Мишши телейлĕ ҫыравҫă. Ун сăввисем тăрăх чи талантлă композиторсем юрă тăваҫҫĕ, вĕсене чи пултаруллă пирĕн юрăҫсем юрласа халăха савăнтараҫҫĕ.